ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012

# Çĕнтерÿ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: www.put-pobedy.cap.ru

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ • 2012 çул • çĕртме /июнь/ уйăхĕн 20-мĕшĕ • юн кун • 72/10541/ № • Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕрпел хĕрĕсене çитекеннисем çук

«Янгорчино» кооперативри Наталия Григорьева дояркăпа Надежда Сергеева техник-осеменатор иккĕшĕ те республикăри конкурссенче пĕрремĕш вырăнсем йышăнчĕç

**Çĕртме уйăхĕн 14–15-мĕшĕсенче «Янгорчино» кооперативра ĕнесене машинăпа сăвакан операторсемпе выльăх-чĕрлĕхе искусственнăй майпа пĕтĕлентерекен техниксен республикăри 33-мĕш тата 31-мĕш конкурсĕсем иртрĕç. Чи маттуррисем, хастаррисем пысăк чыс-хисепе тивĕçрĕç.**

**КОНКУРС**

Ăмăртусем йĕркелени ĕç çыннисене профессии ăсталăхне туптама, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма пулăшать. «Янгорчино» хуçалăх территорине дояркăсем 24-ăн, техник-осеменаторсем 25-ĕн пухăнчĕç. Пурте вĕсем хăйсен районĕсенче мала тухнисем. Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов, «Янгорчино» кооператив ертÿçи Геннадий Романов конкурсантсене ăнăçу, профессии ăсталăхне çÿллĕ шайра кăтартма сунчĕç.

Хĕрÿ тупăшу икĕ кун иртрĕ. «Янгорчино» кооператив ĕçченĕсем пуринчен маттуррисем пулчĕç. Наталия Григорьева ĕнесене машинăпа сăвакан операторсем хушшинче мала тухрĕ, 91,3 балл пухса пьедесталăн чи çÿллĕ картлашки çине хăпарма тивĕçрĕ. Пĕлтĕрхи ăмăртура вăл иккĕмĕш пулнă. Çак хуçалăхри Надежда Сергеева та çĕнтерчĕ. Техник-осеменаторсен конкурсĕнче ăна çитекенни пулмарĕ, вăл 97 балл пухрĕ. Надежда Сергеева иртнĕ çул та мала тухнă, абсолютлă чемпионка пулса тăнă. 2010 çулта республика чысне Раççейри конкурсра хÿтĕленĕ.



Н.Григорьевăна – ЧР ял хуçалăх министерствин дипломĕ.

Мала тухнисене, хастарлăх кăтартнисене, çавăн пекех çамрăк конкурсантсене Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Эдуард Александров министерствăн Дипломĕпе, Тавĕпе чысларĕ. Çавăн пекех профессии ăмăртăвĕсенче палăрнисем хаклă парнесене те тивĕçрĕç. Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Вячеслав Горбунов ферма ĕçченĕсен иксĕлми тăрăшулăхне палăртрĕ, канмалли кунсенче те, уявсенче те вăй хуракансем чăннипех хисепе тивĕçлĕ.

Конкурса хутшăннисене ĕçре малалла та пысăк çитĕнÿсем тума – дояркăсене çулталăкри сĕт сăвăмне 6–7 пин килограма çитерме, техник-осеменаторсене 100 ĕнерен 100 пăру илме – сунчĕç. Республикăри ăмăртусене ирттерес тĕлĕшпе яваплăха туйса тăрăшнăшăн Вăрнар район администрацине, «Янгорчино» кооператив ертÿçине, сĕт-çу фермин коллективне пысăк тав сăмахĕ каларĕç.

Конкурса килнисене Вăрнарти, Çĕрпелти культура çурчĕсен коллективĕсем концерт кăтартса савăнтарчĕç.

Е.ТИКИНЕВА.



Пьедесталăн чи çÿллĕ картлашки çинче – Н.Сергеева.

## Çапăçăва пĕрремĕш кĕнисем

***Июнĕн 22-мĕшĕ – Асăнупа хурлану кунĕ***



1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ирхи шăплăха бомбăсемпе снарядсем çурăлни татнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çапла пуçланнă. Вăл вăхăтра çак вăрçă этемлĕх историне чи хăрушă та юнлă вăрçă пулса кĕрсе юлассине никам та пĕлмен, ăнсăртран пуçланнăскер, 1418 кун та çĕр таран тăсăласса шутлама та пултарайман. Совет çыннине Çĕнтерÿ мĕнле хакпа тивĕçессине тавçăрайман та.

Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех тăшмана хирĕç тăнисем хушшинче Вăрнар районĕнчен тухнă çынсем те пур. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче акă Львов облаçĕнчи Ляшковск районĕнчи çапăçу стрелоксен 97-мĕш дивизийĕн 136-мĕш полкĕн салтакĕшĕн Михаил Васильевич Васильевшăн (1921 çулта çуралнă) пĕрремĕш тата юлашки пулнă. Ентешĕ тата пĕр полкра тăнă Василий Сергеевич Сергеев хĕрлĕ армеец унран пĕр кун ытларах кăна пурăннă. 1921 çулта çуралнă В.С.Сергеев, стрелоксен 136-мĕш полкĕн радисчĕ, 1941 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче Львов облаçĕнчи Краковецк районĕнчи Свидница сали çывăхĕнчи çапăçура пуçне хунă. Мĕнле тата мĕнле лару-тăрура пурнăçран уйрăлнă – паллă мар. Архив докуменчĕсен «типĕ» йĕркисем кĕскен кăна «çапăçура вилнĕ» тесе палăртаççĕ.

Анчах кашнинчех апла мар. Тепĕр чухне çар чĕлхипе çырнă темиçе хут листинчен нумай çул каялла Тăван çĕршывшăн пурнăçне панă салтаксен юлашки кунĕ е сехечĕ çинчен пĕлме пулать. Çак документсем пире Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çĕнĕ е сахал тĕпченĕ страницисене уçма май параççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче «минăсем шыракан тата

2-мĕш стр.

**01 СЛУЖБА АСĂРХАТТАРАТЬ**

## Çулăм сиенне ăнлантарăр

**Шкулсенче каникул пуçланнă май çак вăхăтра ачасен айăпĕпе пушарсем тухас хăрушлăх ÿсет. Килте асăрхавсăр юлнă ачасем çулăмпа ашкăнни пысăк инкекпе вĕçленме пултарать. Вĕсен аллине шăрпăк лекрĕ-тĕк, хăшĕ-пĕри тĕрлĕ япалана çунтарса пăхас тет, çакна вăйă вырăнне шутлать.**

Ачасен пĕтĕмпех тытса пăхас, пĕтĕмпех пĕлес, асլисем пек пулас килет-çке. Аслисем çулăмпа усă курнине, вăл апат-çимĕç хатĕрлеме е ытти ĕçсене тума пулăшнине курса ачасем унăн сиенне туллин ăнланмаççĕ, хăрамаççĕ. Çавăнпа та вĕсемпе пушар хăрушсăрлăх правилисем çинчен калаçмалла, çулăмпа вылянин хăрушлăхне ăнлантармалла, пушар мĕнле инкек кÿнине каласа кăтартмалла. Шăрпăксене, зажигалкăсене пĕчĕккисем çитмелле ан хурăр, пысăкраххисене электроприборсемпе ĕçлеме вĕрентĕр.

Тепĕр чухне ачасене чăнах та вăхăтлăха килте хăйсем тĕллĕнех хăварма тивет. Анчах килтен тухса каяс умĕн аслăраххисене пĕчĕккисене çирĕп асăрхама хушса хăвармалла. Е кÿршĕсене, пĕлĕшсене-тăвансене ачасемпе вăхăтлăх пулма ыйтсан аванрах.

Ачасене çуртсенче, хваттер-пÿлĕмсенче питĕрсе хăварни уйрăмах хăрушă. Пушар тухас-тăк, çунакан пÿлĕмрен хăйсем тĕллĕн тухма йывăр пулĕ. Вĕсене пулăшу чĕнме вĕрентни те пĕлтерĕшлĕ, инкекре нихăçан та çухалса ан кайччăр.

И.МАКСИМОВА,
Вăрнарти 27-мĕш пушар чаçĕн инженерĕ.

*Вут-çулăм алхасма тытăнсан тÿрех «01», «2-50-01», «112» номерсемпе шăнкăравламалла.*

*Ялсенчи уйрăм постсен, пушар командисен номерĕсем: 8-927-845-01-97 (Ярмушка);*

*8-937-373-08-00 (Çĕрпел);*
*8-917-669-31-94 (Калинино);*
*8-962-598-77-42 (Туçи Çармăс);*
*8-962-598-77-41 (Отиккăвă);*
*43-2-27 (Кульцав).*

## Асăрханăр: сăвăссем!

Кĕтÿри выльăх-чĕрлĕхе уй-хирте сăвăссем йышлăн тапăнаççĕ. Сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем юн ĕмеççĕ, вĕсем «тĕпленнĕ» вырăнта сурансем пулса каяççĕ. Выльăх-чĕрлĕх начарланать, япăх ÿсет. Сăвăссем вăйлă тапăнсан выльăхсем çуллахи тапхăрта 5–6 литр юн çухатаççĕ. Ĕнесем сĕт 25–40 процент таран сахалрах пама пуçлаççĕ.

Сăвăссем мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕхĕн мăйĕ, хырăмĕ айне, урасем хушшине, ĕнесен çилли çине кĕрсе лараççĕ. Качакасемпе сурăхсен хÿри айĕнче те пухăнаççĕ.

Сăвăссене пĕтерессипе тапхăр тăршшĕпех тăрăшмалла, гексахлоранпа, неостомазонпа, бутокспа усă курмалла.

Е.ГРИГОРЬЕВА,
Кăмашри ветеринари участокĕн заведующийĕ.

**ÇАНТАЛĂК**

| | Кĕçнерни кун 21.06 | Эрне кун 22.06 | Шăмат кун 23.06 |
|---|---|---|---|
| кăнтăрла | +24 | +21 | +20 |
| çĕрле | +16 | +16 | +12 |

*«Метеоновости» ИА информацийĕ тăрăх.*

**Районти «Çĕнтерÿ çулĕ» хаçата çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать**

**Район хаçатне 2012 çулăн иккĕмĕш çур çулĕ валли почта урлă илсе тăма 199 тенкĕ те 80 пуспа, çырăнтараççĕ, редакцие килсе илмелле – 120 тенкĕпе.**
**«Çĕнтерÿ çулĕ» хаçата çырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаçата малашне те тÿлевсĕр илсе тăрĕç.**

**РАЙОН ХАÇАТНЕ ИЮНĔН 27-МĔШЧЕН КĂНА ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ «ÇĔНТЕРÿ ÇУЛĔ» ХАÇАТСĂР АН ЮЛĂР. ЮРАТНĂ ХАÇАТА ÇЫРĂНĂР, ВУЛĂР.**




# Яланлăхах асăмăрта...

## Вăрнар ен – Геройсен тăрăхĕ

Проект Чăваш ен культура министерстви пулăшнипе пурнăçланать.
Кăларăмшăн явапли С.Чикмякова. Тел. 2-52-30. Сайт адресĕ www.put-pobedy.cap.ru.

## Анатолий Александрович Иванов



1920 çулта Канаш районĕнчи Высоковка ялĕнче çуралнă. Вырăс. Вăрçă пуçланиччен Канаш–Шупашкар чукун çул строительствинче бухгалтерта ĕçленĕ. Çара 1940 çулта илнĕ.

Вăрçă çулĕ 1941 çулхи кĕркунне Мускав çывăхĕнче пуçланнă. Хамăр республикăра йĕркеленнĕ стрелоксен 324-мĕш дивизийĕ йышĕнче тăнă. Жиздра шывĕ хĕрринчи хаяр çапăçусенче отделени командирĕ пуçне хунă, А.Иванов çирĕп йышăнусем тунине кура полк командирĕ ăна разведка взводне ертсе пыма хушнă. Анчах пĕрремĕш кун çамрăк командиршăн ăнăççăр иртнĕ, разведушкăн асрăханусăр пулнипе задание пурнăçлайман, иккĕмĕшĕнче полк командирĕн шанăçне тӳрре кăларнă.

1943 çулхи çулла полкăн пĕр батальонĕ тăшман ункине лекнĕ, офицерсем нумайăшĕ вилсе пĕтнĕ. Анчах позицирен кирек мĕнле пулсан та чакмалла мар. Подразделенинче çиччĕн кăна юлнă, патронсем те пĕтсе çитнĕ, пулемет сасси шăпланнă. А.Ивановăн кăна хăйĕн автомачĕ тата ытти хĕрлĕ армеецсен штыкĕсем тăшмана тытса тăма май панă. Вĕсем юлашки вăйпа çапăçнă.

1943 çулхи октябрьте стрелоксен 96-мĕш гварди дивизи йышĕпе тăшман чаçĕсене аркатса Днепр патне тухнă. Юхан шывăн сылтăм çыранĕнчи хуласене ирĕке кăларма тивнĕ. Иванова ударлă ушкăн йышĕпе çыран леш енне каçма приказ панă. Взвод хыççăн взвод шăппăн каçма тытăннă, анчах та тăшман çакна сиссе вĕсем çине тăхлан сирпĕтме тытăннă, анчах пирĕннисем парăнман. Иванов ертсе пыракан ударлă ушкăн плацдарма тытса тăма хушу илнĕ, вĕсем совет салтакĕсен тĕп вăйĕ ку вырăнтан каçас пек суя витĕм тунă. Дивизи вара вăл вăхăтра урăх çĕртен каçнă.

Днепр урлă каçнă чухне çар заданине ăнăçлă пурнăçланăшăн, хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Анатолий Александрович Иванова 1943 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Вăрçă хыççăн вăл Вăрнара куçса килнĕ, райĕçтăвком, поселок ĕçтăвкомĕн председателĕнче, çу завочĕн тата нефтебаза директорĕнче ĕçленĕ. Ăна Ленин, Хĕрлĕ Çăлтăр, Александр Невский, I тата II степень Аслă Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе наградăланă. Чăваш АССРĕн Ĕç Мухтавĕн тата Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ, Вăрнар поселокĕн Хисеплĕ гражданинĕ. А.А.Иванов 2002 çулта вилнĕ.

## Алексей Иванович Иванов



1923 çулта Кив Сăрьел ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1941 çулта Вăрнарти зооветтехникум пĕтернĕ хыççăн Шăхасан районĕнче зоотехникра ĕçленĕ. Анчах нумай мар, 1942 çул пуçламăшĕнче ăна çара илнĕ, май уйăхĕнчен – фронта.

Хĕрӳ çапăçăва çамрăк артиллеристăн çулла кĕме тивнĕ: Сталинград çывăхĕнчи çапăçусем уншăн чăн пурнăç шкулĕ пулса тăнă: нимĕç самолечĕсем артиллеристсен позицийĕсем çийĕн сехечĕ-сехечĕпе вĕçнĕ, бомбăсем тăкнă, минăсем сирпĕннĕ. Тăшман танкĕсем пур енчен те хупăрласа илнĕ. Анчах совет салтакĕсем вĕсене хăйсене тĕп тума паман, фашистсене çулăмпа «ăшаланă».

Август уйăхĕн 28-мĕшĕнче Сталинградшăн пынă çапăçура Алексей Иванов наводчик тăшман ункине путлантарма пулăшнă, анчах аманнă. Саратоври госпитальте сипленсе хăйне лайăх туйма пуçласанах фронта яма ыйтнă, анчах та кĕлеткинче снаряд ванчăкĕсем чылай ларнине кура тухтăрсем килĕшесшĕн пулман. Чăваш каччи пурпĕр йăлăнма пăрахман – хĕл вĕçĕнче тинех врач комиссийĕ ăна фронта кайма ирĕк панă. Вăл Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн запасри полкĕн йышĕпе çапăçăва кĕнĕ.

1943 çулхи кĕркунне Днепр çинчи çапăçусенче вăл хăйне опытлă воин пекех тытнă. Вăл хăйĕн орудийĕпе тăшман çулне пӳлекенсенчен пĕри пулнă. Çакăншăн ăна «Хăюлăхшăн» медальпе нагардăланă.

1944 çулхи çуркунне Украинăн сылтăм çыранне хӳтĕлес çапăçусенчи артиллеристăн паттăрлăхĕ пирки фрончĕпех ырă ят сарăлнă. Вăл нимĕçсен ултă танкне, сакăр вунă ытла салтакне тата офицерне пĕтерме пултарнă. Куншăн иккĕмĕш çар наградине – Хĕрлĕ Çăлтăр ордена – тивĕçнĕ.

Молдавинчи, Румынинчи çапăçусене хутшăннă. 1945 çулхи январĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 4-мĕшĕччен 5-мĕш ударлă арми йышĕпе Польша тата Германи çĕрĕсенче тăшман тылĕнчи стратегилле пунктсене тата çул çыхăнăвĕсене тытса илме пултарнă. Фреденберг хулишĕн пынă тытăçусенче вăл вăрттăн маневрпа тăшман тылне тухса çулăм уçнă, хулана пĕрремĕш пырса кĕнĕ, гитлеровецсен станковăй икĕ пулеметне, хăй тĕллĕн çӳрекен пушкине тата 40-е яхăн салтакне тĕп тунă. Ладиберг хулишĕн пынă çапăçура та хăюлăх кăтартнă, Одер шывĕ хĕрринче пехота килсе çитиччен пĕчченех тăшмана хирĕç тăнă, хăй тĕллĕн çӳрекен икĕ орудие тата икĕ танка путлантарнă. Анчах аманнă. 1945 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне пама тăратнă. Апрельте тăшман йăвине – Берлин çине наступлени пуçланă. Анчах та Одер плацдармĕшĕн пынă çапăçусенче Алексей Ивановăн пурнăçĕ татăлнă.

Тăванĕсем ун çинчен икĕ çул нимĕн те пĕлмен, 1947 çулхи август вĕçĕнче кăна тăван килĕнче çыру илнĕ, унта Алексей Иванович Иванов паттăррăн пуçне хуни, 1945 çулхи мартăн 24-мĕшĕнчи Указпа ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен пĕлтернĕ.

## Степан Илларионович Илларионов



1904 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче Кивçурт Енĕш ялĕнче çуралнă. Ачалăхĕ кунтах иртнĕ. 1938 çулта çемйипех Бурсак (ун чухне Вăрнар, халĕ Йĕпреç районĕ) куçса кайнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин малтанхи кунĕсенчех ăна çара илнĕ. Малтанах вăл стрелоксен запасри 14-мĕш бригадинче службăра тăнă. 1942 çулхи пуш уйăхĕнчен – фронтра. Фашистла захватчиксене хирĕç пынă çапăçусенче Илларионов яланах малтисен ретĕнче пулнă, çар ĕçне пĕлсе, çирĕппĕн пурнăçланă. Йывăр задачăсене пурнăçлама тивнĕ чухне командир ăна яланах мала янă.

Витебск çывăхĕнчи Беловетчи ялне ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçура вăл пысăк хастарлăх кăтартнă. Нимĕçсем парăнма шутламан, пирĕннисем çине татти-сыпписĕр вут-çулăм тăкнă. Хĕрлĕ армеецсен подразделенийĕ черетлĕ атакăна çĕкленме хатĕрленнĕ кăна, леш енчен тăшман пулеметран пеме тытăннă, пуçа çĕклеме те май килмен.

С.Илларионов хыт-хура хушшинче пытанса хырăмпа шуса нимĕç пулеметчикĕ вырнаçнă çĕре çитнĕ. Темиçе метр пек юлсан тăшман «йăвине» гранатăсем ывăтнă, унтан хайхи пулемета ярса тытнă, унпа фашистсене пеме тытăннă. Çапла вăл хамăр чаçсене малалла каймa çул уçнă. Çак çапăçури паттăрлăхшăн ăна 1943 çулта Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

1944 çулхи июнĕн 25-мĕшĕнче Витебск облаçĕнчи Сиротинск районĕнчи Балбетч ялĕ çывăхĕнче Хĕвеланăç Двина урлă каçнă чухне те иксĕлми хăюлăх кăтартнă. Илларионов ертсе пынипе çичĕ салтак разведкăна тухнă, тăшман вырнаçнă çыран еннелле шăппăн ишме тытăннă. Тул çутăличчен каçнă, анчах вĕсене нимĕç автоматчикĕсем кĕтсе тăнă, пеме тытăннă. С.Илларионов вĕсем еннелле «лимонкăсем» ывăтнă, çапăçăва ун юлташĕсем те кĕнĕ. Пирĕн ентеш виçĕ фрица тĕп тунă. Салтаксем çиçĕмле хăвăртлăхпа тăшман траншейине пырса кĕнĕ, пулемета тата вун сакăр нимĕçе пĕтернĕ. Çак вăхăтра шыв урлă стрелоксен ротисем те каçнă.

Тăшмана йĕрлесе Илларионов ертсе пыракан ушкăн Залужье ялне пырса кĕнĕ. Анчах тан мар çапăçура пирĕн салтаксем пĕрин хыççăн тепри çĕре ӳкнĕ. «Сире çăмăллăн пурпĕр парăнмастăп!» – хыттăн кăшкăрса янă та вăл аллинчи юлашки гранатине нимĕçсем енне ывăтнă. Хăй вара ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Ăна Витебск облаçĕнчи Бешенковичи районĕнчи Галини ялĕнчи масарта пытарнă. Юлашки çапăçури паттăрлăхшăн пирĕн ентеше 1944 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче СССР Аслă Канашĕн Указĕпе, вилнĕ хыççăн, Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

## Федор Иванович Ашмаров



1897 çулта Мăн Явăш ялĕнче çуралнă. Виçĕ вăрçă ветеранĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пысăк наградăна – Георгий хĕресне илме тивĕç пулнă. Граждан вăрçине хутшăннă.

1940 çулта Ашмаровсен çемйи Красноярск крайĕнчи Даури районне куçса кайнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан Федор Иванович фронта каяс кăмăлпа çар комиссарĕ патне пĕрре анчах çитмен. Юлашкинчен вăл С.М.Буденный патне хăй ирĕкĕпе фронта яма пулăшма ыйтса çырнă. Вăл 1944 çулхи февральте фронта тухса кайнă.

...Совет çарĕ тăшмана Рига заливĕ еннелле хĕссе пынă. Фашистсем Латви ССРĕнчи Лудза районĕнче пысăк оборона йĕркелеме шутланă. Рундран сали патĕнче иртекен аслă çул çинче тăшманăн техника нумайланнă. Çакăн çинчен фронт командованийĕн разведки пĕлтернĕ. Фашистсен планне аркатмалла пулнă. Ку задание пурнăçлассине 219-мĕш дивизири 375-мĕш полкăн пĕрремĕш ротинчи пушкăрт каччи Х. Ахметгалин аслă сержант ертсе пыракан взвод хăй çине илнĕ. Тăшман тылне хăй ирĕкĕпе разведкăна каяс текенсем хушшинче икĕ чăваш – Федор Ашмаровпа Матвей Чернов та – тăнă.

Тавралăха каç сĕмĕ хупăрласан паттăр разведчиксен ушкăнĕ тăшман окопĕсем еннелле шуса кайнă. Вĕсем Сунупльва хуторĕ çумĕнчи 144-мĕш сăрта хăпарса вырнаçнă, тăшман колоннисем çине пирĕн артиллеристсем снаряд хыççăн снаряд ăсатма тытăннă. Гитлеровецсем сăрта хупăрласа илнĕ, совет салтакĕсене тыткăна илме шутланă. Хаяр та тан мар çапăçу пуçланнă. Вăл икĕ кун хушши пĕр чарăнмасăр вĕресе тăнă. Харсăр разведчиксем тăшманăн икçĕр ытла салтакне леш тĕнчене ăсатнă. Анчах хăйсен йышĕ те чаксах пынă. Сăртра тăваттăн кăна тăрса юлнă. Вĕсенчен иккĕшĕ çеç, Ашмаровпа Андронов, пăшал тытса пеме пултарнă. Совет салтакĕсем çитиччен паттăрсем татах кĕрешнĕ, çакăнтах пуçĕсене хунă. Анчах тăшман малалла иртеймен.

Ф.Ашмаров 1944 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче Латви çĕрĕ çинче пуçне хунă, вăл Лудза хули çывăхĕнчи тăванла масарта канлĕх тупнă. Совет Союзĕн Геройĕн ятне 1945 çулхи мартăн 24-мĕшĕнче панă.

## Çапăçăва пĕрремĕш кĕнисем

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.)

танксене тĕп тăвакан йытăсен батальонĕсем» пулнине чылайăшĕ пĕлмест те. Çакăн пек подразделенинче, тĕрĕсрех каласан, кунашкал 27-мĕш батальонра, Вăрнар районĕнчи Вăрманкас ялĕнче 1910 çулта çуралнă Иван Григорьевич Григорьев службăра тăнă. Вăл нумайăшĕ пекех вăрçа 1941 çулхи июньте кĕнĕ. Хăйĕн батальонĕпе вăл Курск пĕккинчи паллă çапăçăва хутшăннă. Акă мĕн çырать ун пирки командирĕ Шишов капитан: «1943 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче Курск облаçĕнчи Черкасск сали тата Ярки хуторĕ патĕнче стрелоксен 67-мĕш гварди дивизийĕн 196-мĕш полкĕн йышĕпе тăшман танкĕсене тата пехотине хирĕç пыракан хаяр çапăçура йытăпа нимĕç танкне сирпĕтсе янă. Тан мар çапăçура паттăрла пуçне хунă».

Воронеж фрончĕн 1943 çулхи августăн 28-мĕшĕнчи 0169 №-лĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн И.Г.Григорьева вăрçăри паттăрлăхшăн, вилнĕ хыççăн, II степень Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин орденĕпе наградăланă.

Çакнашкал орденах Вăрнар районĕн тепĕр паттăрĕ Иван Артемьевич Артемьев та тивĕçнĕ. Вăл 1916 çулта Упнер ялĕнче çуралнă. Вăрнар район çар комиссариачĕ ăна Хĕрлĕ Çара 1941 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче илнĕ. Виçĕ çулта ахаль салтакран аслă лейтенанта çитнĕ, ырă ятпа палăрнă. 1943 çул вĕçĕнче ăна явапллă должноçа лартнă, вăл Çарăн уйрăм 35-мĕш штраф ротин взвод командирĕ пулса тăнă.

Хальхи вăхăтра штрафниксем пирки нумай çыраççĕ. Нумайăшне – шутласа кăларса, анчах та пĕр япалана хирĕçлеме çук – штраф подразделенийĕсем нихăçан та тылра пытанса ларман тата вĕсен командирĕсем пулма чи лайăх офицерсене суйланă. Вĕсем умĕнче мĕнле тĕллевсем тăнине Артемьевăн награда хутĕнчен пĕлме пулать: «1944 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче Сярг кӳлли çывăхĕнче тыткăна илекен разведушкăна ертсе пырас ĕçре хăюлăх тата хастарлăх кăтартнă. Нейтраллă зонăна çĕнсе унăн ушкăнĕ тăшман траншейине пырса кĕнĕ, икĕ станковăй пулемета тĕп тунă, автомачĕпе ытти тăшман резервĕ килессине чарнă, финсен дотне тĕп тунă, пĕр салтака тыткăна илнĕ. Артемьев разведка ушкăнĕпе пулса çар заданине пурнăçлас ĕçре хăюлăх, паттăрлăх кăтартнă, анчах тăшман мининчен вилмеллех аманнă». Разведушкăна пĕлсе хатĕрленĕшĕн тата йĕркеленĕшĕн, хаклă сведенисем панă салтака тыткăна илнĕшĕн И.А.Артемьева, вилнĕ хыççăн, 1944 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче II степень Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин орденĕпе наградăланă.

Июнĕн 22-мĕшĕ – Асăну тата хурлану кунĕ. Çак кун эпир каллех хамăр çĕршыва хӳтĕлесе хăварнă паттăрсене пуç тайăпăр.

**А.ЧЕКАНОВ,**
**Чулхулари «Курган» шырав отрячĕн командирĕ.**

### ПИРĔН СПРАВКА

*Андрей Владимирович Чеканов Горький облаçĕнчи Богородск хулинче çуралнă. 37 çулта. Чулхулари Н.Лобачевский ячĕллĕ университета вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл шырав экспедицийĕсене активлă хутшăнма тытăннă. 3-мĕш курсран çар ретне тăнă, пĕрремĕш чечен вăрçине хутшăннă. Салтакран таврăнсан малалла вĕренсе аслă пĕлӳ илнĕ. Контракт йĕркипе пурнăçне каллех Раççей Çарĕпе çыхăнтарнă. 2002 çултанпа – Чулхула университечĕ çумĕнче йĕркеленĕ «Курган» шырав отрячĕн командирĕ. Шыравçăсем иртнĕ вăрçă хирĕнче пуç хунă воинсене тупса палăртассипе çав тери пысăк ĕç тăваççĕ. «Курган» отряд членĕсем Хĕрлĕ Çарăн çапăçура пуç хунă 4 пин ытла салтакĕпе командирĕн ӳчĕсене тупса çар чысĕпе пытарнă. Вĕсенчен 356-шĕн ятне-шывне палăртма май килнĕ. Шыравçăсем архивсенче те нумай ĕçлеççĕ.*

*Андрей Чеканов – Вăрнар кĕрӳшĕ. Çавăнпа вăл вăрçăран таврăнайман пирĕн паттăр ентешсен шăпипе те хытă кăсăкланать.*

## Аллея кирлех

Эпĕ Вăрнар районне чĕререн юрататăп. Ачалăхăн темиçе çулне эпĕ Çĕмĕрле хулинче ирттернĕ, иккĕмĕш класран вара Вăрнарти 1-мĕш вăтам шкулта вĕреннĕ.

Вăрнарсем ытти чăвашсем пекех хăйсен ентешĕсене сума сăваççĕ. 2004 çулта кăларнă Вăрнар район энциклопедийĕ урлă акă Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмла Ĕç Геройĕсем, ученăйсем, халăх артисчĕсем, спортсменсем, çар пуçĕсем, политиксем пирки пĕлме пулать.

Чукун çул вокзалĕн площадĕнче хамăр районти Совет Союзĕн Геройĕсене, вăрçăра паттăррăн çапăçса пуçĕсене хунă салтаксене халалласа палăк лартни аван. Анчах та ман шутпа ун çумĕнче пушă вырăн «янраса» ларни килĕшӳллĕ мар пек туйăнать. Кунта Вăрнар районĕн Мухтав аллейине уçсан тем пекехчĕ. Унта çӳрекен кашни çыннăн – ача-и вăл е аслă çын – хăйĕн ентешĕшĕн мăнаçлăх туйтăр, çĕршывăн кирек хăш кĕтесĕнче пурăнсан та тăван район аталанăвĕшĕн тăрăштăр. Аллея никĕсне кирек мĕнле строительствăпа архитектура идейи хывăнтăр: çурма çавра-и е «каре»... Вăрнар районĕн Аллейăра вырнаçакан мрамор е бронза плитасем çинче ăрусене каласа памалли пурах.

Ман шухăша мĕн пур çын: район ертӳçисем, депутатсемпе предпринимательсем, вĕрентекенсемпе тухтăрсем, ветерансем, ахаль çынсем, вĕренекенсем те анлăн сӳтсе явасса шанас килет.

**С.ВЛАДИМИРОВ,**
**экономика наукисен докторĕ, Санкт-Петербургри машиностроительнăй патшалăх университечĕн менеджмент кафедрин профессорĕ.**

